Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

67 (7384) № ✻ Шăмат кун, 2006 çулхи августăн (çурла) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Паян – Физкультурниксен кунĕ

### ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!

Физкультурниксен кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

Физкультурăпа спорт хальхи общество пурнăçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем наци сывлăхне çирĕплетеççĕ кăна мар, паттăрлăх, ума лартнă тĕллев патне талпăнас, умри йывăрлăхсене çĕнтерсе кăткăс лару-тăруран ăнăçлă тухас туйăмсене аталантарма май параççĕ.

Физкультурăпа спорта аталантарасси – Чăваш Республикинчи пĕлтерĕшлĕ патшалăх приоритечĕсенчен пĕри. Хальхи физкультурăпа сиплев сооруженийĕсен хисепĕ ӳссе пырать. Вĕсенче республикăри вуншар пин çын хăйсен сывлăхне çирĕплетет. Çуллен массăллă спорт уявĕсем çĕршер иртеççĕ. Сывă, активлă пурнăç йĕркине тытса пыракансем вĕсене ытларах та ытларах хутшăнаççĕ.

Республикăра пĕтĕм Раççей, тĕнче пĕлтерĕшлĕ ăмăртусем пĕрре кăна мар иртнĕ. Пысăк ăмăртусене хутшăнса палăрăмлă çитĕнӳсем тăвакан хамăр атлетсемпе эпир тивĕçлипех мухтанатпăр.

Тренерсемпе специалистсене, спорт ветеранĕсене уйрăмах тав сăмахĕ калатăп. Вĕсем республикăн спортри çитĕнĕвĕсене хăйсен пысăк тӳпине хываççĕ, пуян опычĕпе ăсталăхне çитĕнекен ăрăва параççĕ.

Сире пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçлă стартсем тата пысăк çитĕнӳсем, оптимизм, телей тата ăнăçу сунатăп.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

### ХИСЕПЛĔ ФИЗКУЛЬТУРНИКСЕМ, СПОРТСМЕНСЕМ, СПОРТПА ТУСЛĂ ÇЫНСЕМ ТАТА ФИЗКУЛЬТУРА ЮХĂМĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире Физкультурниксен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Физкультурăпа спорт кашни çыннăн пурнăçĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ. Мĕншĕн тесессĕн вĕсем пире çирĕп сывлăхлă пулма пулăшаççĕ. Сывлăхлă, çирĕп кăмăл-туйăмлă, сывă пурнăç йĕркипе пурăнакан çынсем вара район тĕрекĕ пулса тăраççĕ. Ку тĕлĕшпе эсир нумай тимлетĕр. Тавах сире çакăншăн.

Сирĕн пуçарулăхăрпа ырми-канми ĕçĕре пулах ĕнтĕ пирĕн ентешсем республика шайĕнче çеç мар, Раççей, Европа, тĕнче шайĕнчи ăмăртусенче те район чысне хӳтĕлеççĕ. Çĕнтерӳсем туса, районăн ятне-сумне çĕклеççĕ. Вĕсем хăйсен ырă тĕслĕхĕпе ыттисене хавхалантарса пыраççĕ. Çитĕнекен ăрăва нравственость тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçре çакă пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Сире малашне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тума çирĕп сывлăх, ăнăçупа ăнтăлу, хавхалану, телей сунатăп. Маларра та ыттисемшĕн вăй-хал паракан çăл куç пулăр. Физкультурăпа спорт пуриншĕн те кун йĕркин уйрăлми пайĕ пулса тăччăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ыран – Строительсен кунĕ

### РЕСПУБЛИКĂМĂРТИ СТРОИТЕЛЬСТВО КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире професси уявĕпе – Строитель кунĕпе – саламлатăп!

Эсир çынсене илемлĕхпе хăтлăх, ăшăпа тирпейлĕх парнелесе хăвăр çине хунă мирлĕ ĕçе тивĕçлипе туса пыратăр. Сирĕн тăрăшулăхпа проектировщиксемпе архитекторсен хăюллă шухăшлавĕсемпе пуçарăвĕсем пурнăçа кĕреççĕ, хуласемпе ялсене çĕнĕ сăн кĕрет. Строительство комплексĕн эффективлă ĕçĕ – экономикăн пур отраслĕсен те динамикăллă аталанăвĕн никĕсĕ.

Паянхи Чăваш Ен темиçе çул ĕнтĕ строительство сферинче Раççейри регионсем хушшинче малти вырăнсене йышăнать. Республикăн кунти ĕçне РФ Президенчĕпе Правительстви пысăк хак параççĕ. Чăваш Ен картти çинче çулсеренех сывлăх сыхлавĕпе социаллă сферăн, культурăпа вĕрентĕвĕн, спортăн çĕнĕ объекчĕсем çĕкленеççĕ. Пурăнмалли çурт-йĕр строительстви пысăк хăвăртлăхпа ӳссе пырать.

Хамăр малта пынине сыхласа хăварас тесен пирĕн татах та ытларах ĕçлемелле. Пысăк профессионализмпа энтузиазм, юратнă ĕçе чунпа парăнса ĕçлени Чăваш Ен строителĕсен татах та пысăкрах никĕсĕ пуласса шанатăп. Çавна валли пурсăра та çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатăп.

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

### ХИСЕПЛĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ!

Сире професси уявĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатăп.

Эсир тăрăшнипе пирĕн район кунран-кун илемлĕрех те хăтлăрах пулса пырать, çынсен пурнăç условийĕсем лайăхланнăçемĕн лайăхланса пыраççĕ. Çĕнĕрен те çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ. Эсирех çĕнĕ çулсем тăватăр, юсатăр. Сирĕн ылтăн аллăрсене пулах районти ялсене çут çанталăк газне кĕртсе пĕтернĕ. Çак ырлăха халĕ çĕнĕ çуртсене кĕртетĕр. Сирĕн ĕç чăннипех те чыслă, хисеплĕ. Районăн экономикипе инфраструктурин аталанăвĕнче сирĕн пархатарлă ĕçĕр пысăк вырăн йышăнать. Тавах сире çакăншăн.

Эсир малашне те ялсен инфраструктурине аталантарассинче, вĕсен социаллă пурнăçне лайăхлатассинче çине тăрса вăй хурасса шанса тăратăп. Сирĕн ĕçĕн пахалăхĕпе тухăçлăхĕ пĕрмай ӳссе пытăр. Умри тĕллевĕрсене пурнăçлама ырлăх-сывлăх, ăнăçу пултăр. Пурне те телей, çемйĕрсенче килĕшӳпе тату пурнăç сунатăп.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Вырма – 2006

# Ĕç çинче малта



Август уйăхне кĕтĕмĕр те ытларах вырма çинчен каласма пуçларăмăр. Районти чылай хуçалăхра "хир карапĕсем" хĕрӳ ĕçре пулсан, теприсем вырма ĕçне пуçăнайман-ха.

Йăлана кĕнĕ тăрăх, çăкăр çитĕнтерекен ĕçне тĕпе хурса, çĕр ĕçченĕн сумлă ĕçне хакласа, районта малта пыракан комбайнерсем хушшинче конкурс ирттереççĕ. Унăн августăн 1-7-мĕшĕсенчи пĕтĕмлетĕвĕпе "Дон-1500" комбайнсемпе ĕçлекенсем хушшинче (ĕç норми 280 тонна) "Ударник" хуçалăхри Владимир Алексеевич Степановпа Владимир Юрьевич Хмелев (пулăшаканĕ) 2-мĕш вырăна тивĕçнĕ. Кĕрхи ĕç ĕçченлĕхе тĕрĕслет, теççĕ халăхра, кунта вĕсем тăрăшулăхпа 223 тонна тĕш тыră пуçтарма ĕлкĕрнĕ. Ку кăтарту районта чи пысăкки. Çав ятпа çĕнтерӳçĕсене агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен профсоюз райкомĕн председателĕ Ф.Ф. Григорьева укçа илме ĕнентерекен свидетельство пачĕ.

Хуçалăхра хĕрӳ ĕçе хатĕрленни курăнать, çанталăк та, ав, васкама хистет. "Хир карапĕсем" хаклă вăхăта сая ямасăр ӳснĕ тырра тĕрĕс-тĕкел пуçтарса кĕртессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ. Юнашар уйра бригадăсенче вăй хуракансем комбайнсем вырнă хыççăнхи улăма çийĕнчех тирпейлеççĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурс çĕнтерӳçисене Ф.Ф. Григорьева саламлать.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Ĕç çи – 2006

**РАЙОНТИ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ТĔШ ТЫРĂПА ПĂРÇА ЙЫШШИ КУЛЬТУРĂСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС, КĔР АКИ ВАЛЛИ ÇĔР ХАТĔРЛЕС ĔÇСЕМ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТНИ**

**Цифрăсен колонкисенче: 1. Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсем çулнă тата вырнă. 2. Кĕрхи культурăсем акма çĕр хатĕрленĕ (августăн 11-мĕшĕ тĕлне, процентпа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 0 | 71 |
| "Волга" | 23 | 100 |
| "Восток» | 28 | 69 |
| «Герой" | 39 | 8 |
| ЗАО "Агро-Урожай" | 78 | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 21 | 52 |
| Ильич яч. хис. | 35 | 80 |
| "Колос" | 0 | 60 |
| Ленин яч. хис. | 2 | 73 |
| "Лидер" | 7 | 28 |
| "Нива" | 29 | 5 |
| "Оринино" | 41 | 26 |
| "Передовик" | 11 | 94 |
| "Свобода" | 33 | 23 |
| "Сеятель" | 0 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 25 | 76 |
| ООО АФ "Рассвет" | 19 | 83 |
| ОАО АФ "Нива" | 0 | 0 |
| "Ударник" | 23 | 70 |
| "Хлебороб" | 12 | 67 |
| Чапаев яч. хис. | 16 | 100 |
| «Чемеево» | 16 | 7 |
| Чкалов яч. хис. | 4 | 120 |
| **Районĕпе** | **18,4** | **60** |

Районĕпе кăçал тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 17442 гектар çинчен пуçтарса кĕртмелле. Ĕнерхи кун тĕлне вĕсене 3213 гектар çинче çулнă тата вырнă. Кĕрхи культурăсенчен тулă 1102 гектартан 855 гектарне (78 процент), ыраш 905 гектартан 451 гектарне (50 процент) пуçтарса илнĕ. Улăма 1371 гектар çинче (вырнин 43 проценчĕ) пухса тирпейленĕ.

Кĕрхи культурăсем акма 5050 гектар çĕр хатĕрлеме палăртнă пулсан, çак вăхăта 3026 гектар (60 процент) хатĕрлеме ĕлкĕрнĕ. «Волга», Чапаев яч. хис., Чкалов яч. хис. хуçалăхсем ку енĕпе плансене тултарма пултарнă, çав вăхăтрах «Агро-Урожай», Суворов яч. хис. хуçалăхсенче, «Нива» агрофирмăра ку ĕçе тытăнман та.

Районĕпе «Волга» хуçалăхра кăна 70 гектар çинче çĕртме сухи тунă.

Нумай çул ӳсекен курăксене 10442 гектар çинчен (95 процент) пĕрремĕш хут çулса илнĕ. «Передовик» хуçалăхра ку ĕç уйрăмах вăраха тăсăлать.

Пĕр çул ӳсекен курăксене 1358 гектар çинчен (планпа 1774 гектар) çулса илнĕ. «Лидер» агрофирмăра вĕсене халĕ те çулма тытăнма васкамаççĕ.

Утă районĕпе 12752 тонна хатĕрлесе хăварма пăхнă пулсан, 8758 тонна (69 процент) типĕтсе купаланă. Е. Андреев яч. хис., «Агро-Урожай», «Восток», Ленин яч. хис. хуçалăхсем ку енĕпе плансене тултарнă.

Сенаж 23946 тонна (95 процент), силос 11331 тонна (54 процент) хывса хăварнă. «Сеятель» хуçалăхра сенаж 2000 тонна хатĕрлеме пăхнă пулсан, ăна пĕр тонна та хывса хăварман.

## Октябрĕн 8-мĕшĕнче – ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

# Тăватă кандидат паллă

Августăн 10-мĕшĕ тĕлне ЧР тăваттăмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн депутатне суйлама 8-мĕш № пĕр мандатлă Муркаш суйлав округĕпе çаксене кандидата тăратнă:

**1. Владислав Григорьевич Данилов,** 1953 çулхи ноябрĕн 12-мĕшĕнче çуралнă, «Муркаш районĕн тĕп больници» сывлăха сыхлас ĕç муниципаллă учрежденийĕн тĕп врачĕ пулса ĕçлет, Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн членĕ, Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн республикăри уйрăмĕ сĕннĕ, 2006 çулхи июлĕн 31-мĕшĕнче кандидата тăратнă.

**2. Владимир Петрович Фирсов,** 1953 çулхи февралĕн 26-мĕшĕнче çуралнă, «ДАР-ИНСТРУМЕНТ» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕн çумĕ пулса ĕçлет, «Раççей патриочĕсем» политика партийĕн республикăри уйрăмĕ сĕннĕ, 2006 çулхи августăн 4-мĕшĕнче кандидата тăратнă.

**3. Александр Платонович Давыдов,** 1973 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче çуралнă, «Моргаушрайбыт» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕ пулса ĕçлет, хăйне хăй сĕннĕ, 2006 çулхи августăн 7-мĕшĕнче кандидата тăратнă.

**4. Владимир Ильич Анисимов,** 1949 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче çуралнă, вăхăтлăх ниçта та ĕçлемест, «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн членĕ, КПРФ Элĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ, «Раççей Федерацийĕнчи коммунистсен партийĕ» политика партийĕн республика уйрăмĕ сĕннĕ, 2006 çулхи августăн 7-мĕшĕнче кандидата тăратнă.

## Çамрăк çемьесене пулăшма

# Ĕç ушкăнĕ йĕркеленĕ

Çамрăк çемьесене патшалăх пулăшăвĕпе усă курма майсем туса парас тĕллевпе район администрацийĕн пуçлăхĕн августăн 8-мĕшĕнчи 237 № йышăнăвĕпе ку енĕпе ĕçлесе пыракан ĕç комиссине йĕркеленĕ, пурнăç условийĕсене лайăхлатма 2006 çулхи август-декабрь уйăхĕсем валли план-график çирĕплетнĕ.

Ĕç комиссине район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ертсе пырать, ĕç комиссийĕн председателĕн çумĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г Никитин, секретарĕ капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертсе пыракан специалисчĕ Р.В. Волкова.

План-графикпа килĕшӳллĕн патшалăх пулăшăвĕпе усă курма тивĕçлĕ çамрăк çемьесем 35. Вăл шутран ипотека кредитне хатĕрлемеллисем 35. 28 çемье ипотека кредичĕн процент ставкисемпе субсиди илет.

## Саламлатпăр

Çак кунсенче физкультурниксем тата строительсем хăйсен професси уявĕсене паллă тăваççĕ. Çав ятпа эпир вĕсене чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр, хăйсен пархатарлă ĕçĕсенче ӳсĕмсем, ырлăх-сывлăх, ăнăçу сунатпăр.

**Пĕтĕм Раççейри «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕ.**

## Йыхрав

# Канашлăва чĕнеççĕ

Кăçалхи августăн 17-мĕшĕнче район администрацийĕн ял хуçалăхпе апат-çимĕç управленийĕ тата республикăри хурт-хăмăр агентстви агропромышленность комплексне кĕрекен ял хуçалăх предприятийĕсенчи хурт-хăмăр ăстисене тата харпăр хăй килĕсенче вĕллесем тытакансене утарсенче кĕркунне туса ирттермелли, хĕле хатĕрленмелли ыйтусене сӳтсе явма чĕнеççĕ. Çавăн пекех пухăннисене видеофильм кăтартĕç. Республикăри хурт-хăмăр ĕçĕпе, район утарĕсенчи ветеринарипе санитари ĕçĕпе паллаштарĕç, хурт-хăмăрçăсемпе утарсем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн условийĕсене йышăнĕç.

Канашлу район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн кабинетĕнче 10 сехетре пуçланать.

## Юбилей

### *Саламлатпăр*



Юратнă çыннăмăра, Шарпаш ялĕнче пурăнакан **Надежда Алексеевна ДИМИТРИЕВАНА** сумлă юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Яланах савăк кăмăллă, паянхи пекех тараватлă, ырă чунлă пулма сĕнетпĕр. Çирĕп сывлăх, çемьере телей, ĕçре çитĕнӳсем пулччăр.

**Салампа: мăшăрĕ, ашшĕпе амăшĕ, шăллĕсемпе йăмăкĕсен çемйисем, хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕ, хăтитăхлачисем, тăванĕсем.**



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, Муркашри юсавпа техника предприятийĕнче чылайранпа вăй хунă **Вячеслав Алексеевич АЛЕКСЕЕВА** çуралнăранпа 75 çул çитнĕ ятпа чун-чĕререн, пур ырă кăмăлтан саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, çемье ăшши сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсемпе прамăнукĕсем, тăванĕсем.**